27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ЯНВАРЬ 9 ЫТЛАРИКУН 5(6756) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсем

Пирӗн ҫӗршыв ҫине нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем килсе тапӑннине пула, ҫитӗнсе ҫитнӗ вӑйпитти ҫынсен вӑрҫӑ хирне тухса каймалла пулчӗ. Предприятисемпе колхозсенчи йывӑр ӗҫе тылра юлнӑ хӗрарӑмсемпе ҫамрӑксен туса пыма тиврӗ. Ҫавна май вара ҫамрӑксене хут вӗрентес ӗҫре хӑш-пӗр йывӑрлӑхсем пулчӗҫ, вӑл йывӑрлӑхсене ҫӗнтерес тӗлӗшпе чылай ӗҫлеме тиврӗ.

Колхозри хӗрӳллӗ ӗҫе туса пынӑ вӑхӑтрах харпӑрхӑй пӗлӗвне ӳстерме ялти ҫамрӑксене майсем туса парас тесе, СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1944 ҫулхи июлӗн 6-мӗшӗнче «Ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсене организацилесси ҫинчен» постановлени йышӑнчӗ. Ҫав шкулсен задачи—ялти ҫамрӑксене пуҫламӑш шкулсемпе тулли мар вӑтам шкулсем панӑ чухлӗ пӗлӳ парасси пулса тӑрать. Вӗсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсенчен хӑтӑлмасӑр вӗренмелле. Ҫав шкулсенче вӗренмелли ҫамрӑксем йышлӑ мар вырӑнсенче кӑнтӑрла ӗҫлекен шкулсем ҫумӗнче каҫхи классем уҫмалла.

Каҫхи шкулсене 14 ҫула ҫитнӗ ҫамрӑксене тата унтан аслӑраххисене илеҫҫӗ. Эрнере пилӗк хутчен 4-шар сехет вӗрентеҫҫӗ.

СССР Совнаркомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, ҫав шкулсенче ултӑ уйӑхран кая мар вӗренмелле. ССР Союзӗн Совнаркомӗ республикӑсенчи ҫутӗҫ органӗсене ҫав шкулсене куллен ертсе пыма, вӗсене квалификациллӗ педагогсем тупса пама, учебниксем, вӗренӳ пособийӗсем тата ҫырмалли хатӗрсем тупса пама хушса хӑварчӗ.

Ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсенче вӗренес ӗҫ иртнӗ ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗнче пуҫланчӗ. Правительство постановленине пурнӑҫа кӗртсе пырса, пирӗн республикӑра каҫхи шкулсенче вӗренме чылай ҫамрӑксене явӑҫтарнӑ. Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарначӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, ялти ҫамрӑксене каҫхи шкулсенче вӗрентме республикӑра 125 класс организациленӗ, вӗсенче пӗтӗмпе 1781 ҫамрӑк вӗренет. Ҫак ӗҫе Элӗк районӗнче ытти районсенчен лайӑхрах организациленӗ, унта 5-мӗш классенче кӑна 100 ҫамрӑк ытла вӗренет.

Анчах, пӗтӗмӗшпе илсен, ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсене организацилесе, вӗсене ертсе пырас ӗҫ республикӑра юлашки вӑхӑта ҫитиччен тӳсме ҫук ҫителӗксӗр пулса пычӗ, халӗ те начар пулса пырать-ха. Халӑха хут вӗрентес ӗҫӗн ҫак пахча тата ответлӑ участокне районсенчи ҫутӗҫ пайӗсем кӑна мар, Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарначӗ те тивӗҫлипе хак памарӗ. Ҫавна пула СССР Совнаркомӗн постановленийӗ чылай районсенче халиччен пурнӑҫа кӗмесӗр юлать. Уйрӑмӑнах Калинино районӗнчи ҫутӗҫ пайӗпе унӑн заведующийӗ Ваньков юлташ ҫинчен чарӑнса тӑмалла, вӗсем ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсене организацилес ӗҫ ҫине бюрократла пӑхрӗҫ, ӑна пурнӑҫа кӗртмерӗҫ. Каҫхи шкулсенче вӗренме тивӗҫлӗ ҫамрӑксене палӑртса, вӗсем хушшинче агитацилле-ӑнлантарулӑ ӗҫ туса пырас, ҫапла вара вӗсене вӗренӗве явӑҫтарас вырӑнне, Калинино районӗнчи ҫутӗҫ пайӗпе унӑн заведующийӗ Ваньков юлташ тӗрӗс мар ҫул ҫине, ҫӳлти органсене ултала ҫул ҫине тӑнӑ: «пирӗн каҫхи шкулсенче вӗренес текенсем ҫук» тесе, ҫак пысӑк ӗҫе алран сирсе яма васканӑ. Анчах, тӗплӗнрех тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, ку районра каҫхи шкулсенче вӗренме тивӗҫлӗ тата вӗренме кӑмӑл тӑвакан ҫамрӑксем ҫителӗклӗ таранах тупӑннӑ. 33 класс организацилесе 518 ҫамрӑка вӗрентме май пурри палӑрнӑ. ВКП(б) райкомӗпе райисполком та ҫутӗҫ пайӗнчи юлташсене тӗрӗс ҫул ҫине тӑратма вӑхӑт тупайман, вӗсене правительство постановленийӗсене хисеплеме вӗрентес тесе нимӗн те туман.

Ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсене организацилесе ертсе пырас ӗҫ республикӑра ҫителӗксӗр пулса пырать пулсан, ҫакӑншӗн вара комсомол организацийӗсем те ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗ, «Ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсене тунӑ ҫӗре комсомол организацисем хутшӑнса ӗҫлесси ҫинчен» ятарласа постановлени йышӑнса, ялсенчи комсомол организацисене ҫак тӗлӗшпе татӑклӑ кӑтартусем парса хӑварчӗ. Вӗсен уйрӑмӑнах ҫав шкулсенче вӗренме ҫамрӑксене явӑҫтарас, учебниксемпе ҫырмалли хатӗрсем тупса парас ӗҫе активлӑн хутшӑнмалла. Анчах ВЛКСМ Калинино, Вӑрмар, Октябрьски, Чкаловски тата ытти райкомӗсем ҫак ӗҫе питӗ сӳрӗккӗн туса пыраҫҫӗ, районсенчи ҫутӗҫ пайӗсене сахал пулӑшаҫҫӗ.

Партипе правительство кӑтартса панӑ тӑрӑх, яллӑ вырӑнсенче ӗҫсыннисене обязательнӑй йӗркепе ҫичӗ ҫул вӗрентмелле. Ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсене организацилесе йӗркелесе яни—всеобуч законне пурнӑҫа кӗртмелли майсенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та ӑна хакламасӑр тӑракан ҫутӗҫ пайӗсемпе комсомол организацисем пысӑк йӑнӑш тӑваҫҫӗ.

ВЛКСМ райкомӗсемпе районсенчи ҫутӗҫ пайӗсен тата комсомолӑн пуҫламӑш организацийӗсемпе ялсенчи ҫутӗҫ работникӗсен ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсене организацилесе ертсе пырас ӗҫе татӑклӑнах лайӑхлатас пулать. Ҫак кунсенчех пур колхозсенче те комсомолецсемпе ҫамрӑксен пухӑвӗсене ирттерсе, СССР Совнаркомӗ 1944 ҫулхи июлӗн 6-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленипе ВЛКСМ Центральный Комитечӗн постановленине ӑнлантарса памалла, ҫичӗ ҫул вӗренмен комсомолецсемпе ҫамрӑксене пурне те каҫхи шкулсенче вӗренме явӑҫтармалла.

Ҫак ответлӑ ӗҫе пурнӑҫа кӗртме райисполкомсемпе ял Совечӗсен тата колхозсен председателӗсем те пысӑк пулӑшу пама тивӗҫлӗ. Вӗсен каҫхи шкулсенче вӗренекен ҫамрӑксене йӗркеллӗ условисем туса пама, вӗренме ҫуртсем тупса пама, ҫуртсене хутма вутӑ, ҫутатма краҫҫын тупса пама тӑрӑшмалла. Ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсенче вӗренекенсене заняти хыҫҫӑн ӗҫлессинчен тата вӗренӳре чӑрмантарма пултаракан ытти ӗҫсенчен хӑтармалла.

Паллах ӗнтӗ, ялти ҫамрӑксен каҫхи шкулӗсен ӗҫӗпе ВКП(б) райкомӗсен те тимлӗн интересленмелле, вӗсен ҫак ӗҫ мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла, ҫутӗҫ пайӗсемпе комсомол организацисене ӗҫре практикӑллӑ пулӑшу памалла. Ҫакна май вара колхозсене партипе комсомол активне тата учительсене яни те питӗ вырӑнлӑ пулнӑ пулӗччӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ЯНВАРӖН 6-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Январӗн 6-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем БУДАПЕШТ районӗнче тӑшманӑн хупӑрласа илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ, 173 квартал туртса илнӗ. Январӗн 5-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче БУДАПЕШТ хулинче пирӗн ҫарсем нимӗҫсемпе венгерсен 1.630 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

БУДАПЕШТ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сирсе-сирсе янӑ, тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухату кӳнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Январӗн 5-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 130 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, вӗсенчен 65 танкне БУДАПЕШТРАН ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 17 самолетне персе ӳкернӗ.

ЯНВАРӖН 7-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Январӗн 7-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем БУДАПЕШТ районӗнче БУДАПЕШТ хулине тӑшмантан тасатассишӗн ҫапӑҫнӑ, 116 квартал тытса илнӗ.

БУДАПЕШТРАН ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сире-сире янӑ. Тӑшман йывӑр ҫухатусем тӳсет пулин те, ҫав-ҫавах БУДАПЕШТ патнелле татса кӗме тапаланать. Вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем ЕСТЕРГОМ хулине хӑварнӑ.

ДУНАЙ шывӗн ҫурҫӗр хӗрринче ЕСТЕРГОМ хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, ГРОН шывӗнчен 20 километр ытла хӗвеланӑҫнелле куҫнӑ, КАМЕНДИН, ЛИБАД, БЕЛА, МУЖЛА, КЕБЕЛКУТ, БАТОРОВЕ, КЕСИ, БУЧ, КАРВА, МАДАР ятлӑ пысӑк ялсене туртса илнӗ. Январӗн 6-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ку районра тӑшманӑн 1300 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ, 54 танкпа 28 тупӑ тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Январӗн 6-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 116 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, вӗсенчен 88 танкне БУДАПЕШТРАН ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 52 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Будапешт районӗнче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн хупӑрласа илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ. Совет чаҫӗсем 116 квартал туртса илнӗ, нимӗҫсенчен хулан вӑтаҫӗрти районӗсене тасатаҫҫӗ. Нимӗҫсем, пирӗн ҫарсем малалла куҫса пынине чарса лартма хӑтланса, урамсенче тӗрлӗ чӑрмавсем тӑваҫҫӗ, пурӑнмалли ҫуртсене тата обществӑллӑ ҫуртсене те нумайӗшне сирпӗнтере-сирпӗнтере яраҫҫӗ. Пӗр чаҫри боецсем, ҫав тери хӑвӑрт атакаласа, паян Будапешт хулин вӑтаҫӗрти пайӗнчи урама туртса илнӗ. Тӑшман, резервсем илсе пырса, умлӑн-хыҫлӑн 12 контратака тунӑ, анчах та гитлеровецсене, пысӑк ҫухатусем кӳрсе, каялла хӑваласа янӑ. Ҫав ҫапӑҫура Майборода капитан ертсе пыракан артиллеристсем нимӗҫсен 3 танкне тата 7 бронетранспортерне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр артиллери подразделенийӗ тӑшманӑн 6 танкне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 4 туппине ҫунтарса янӑ. Тепӗр районра пирӗн гвардейски подразделенисем, малалла куҫса пырса, 400 гитлеровеца вӗлернӗ, 24 пулемет, 100 автомат, пӗр паровоз тата ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 120 вагон тытса илнӗ. 80 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Будапешт хули урамӗсенче пыракан ҫапӑҫусенче совет воинӗсем хӑйсене хӑйсем хӗрхенмесӗр, пысӑк паттӑрлӑхпа кӗрешеҫҫӗ. Тупӑ командирӗ Земченко сержант кун каҫиччен нимӗҫсен пӗр танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата икӗ бронетранспортерне ҫунтарса янӑ. Булава пулеметчик тӑшман бронетранспортерӗ ҫине пенӗ. Бронетранспортер чарӑннӑ. Кох тата Аладусиков рядовойсем ҫав бронетранспортер патне чупса ҫитнӗ те ун ҫинчи гитлеровецсене пурне те гранатӑсемпе вӑркӑнтарса пӗтерсе тӑкнӑ. Разведчиксем Сапожниковпа Лежнев рядовойсем тӑшман тӑракан вырӑна кӗрсе кайнӑ. Совет боецӗсем венгер салтакӗсен ушкӑнне тӗл пулнӑ та тыткӑна парӑнма хушнӑ. 84 венгер хӑйсен хӗҫпӑшалӗ-мӗнӗпех Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ.

* * *

Будапештран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Юлашки кунсенче ку районра тӑшман питӗ йывӑр ҫухатусем тӳснӗ. Ҫапах та нимӗҫсем атакӑсене хӑйсен ҫӗнӗ вӑйӗсене кӗрте-кӗрте яраҫҫӗ, хӑйсен ҫынисем темӗн чухлӗ пӗтеҫҫӗ пулин те, Будапешт патне татса кӗме хӑтланаҫҫӗ. Дунай шывӗн кӑнтӑр хӗрринче нимӗҫ танкӗсемпе пехотин пысӑк группировки ирхине пирӗн позицисене атакӑланӑ. Совет пехотинецӗсемпе артиллерисчӗсем тӑшманӑн хӑйсенчен чылай йышлӑрах вӑйӗсем хӗссе пынине кунӗпех чарса тӑнӑ. Кунти ҫапӑҫусенче темиҫе хутчен те тытӑҫа-тытӑҫа илме лекнӗ. Каҫ пулса килнӗ тӗлелле пирӗн чаҫсем Естергом хулине хӑварнӑ та ҫӗнӗ позицисем ҫине куҫнӑ. Нимӗҫсем, малалла куҫма хӑтланса, тата темиҫе хутчен хаяр атакӑсем тунӑ, анчах тӑшман атакисене сирсе янӑ. Будапештран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, хӑватлӑн персе тата хирӗҫ пыра-пыра ҫапса, тӑшманӑн нумай атакисене сирсе янӑ. Ку участокра кун каҫиччен 1.400 нимӗҫ салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. 49 танк тата бронетранспортер персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. 320 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Совет авиацийӗ, ҫанталӑк начар тӑнине пӑхмасӑрах, тӑшман танкӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Кун каҫиччен пирӗн летчиксем нимӗҫсен 20 танкне ытла, 8 бронетранспортерне тата 60 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ. Пӗр участокра нимӗҫсем, атака тума хатӗрленсе, танксем нумай пухнӑ. Шепелев старши лейтенант командир пулса ертсе пыракан штурмовик-летчиксем тӑшман техники пухӑнса тӑнӑ вырӑна тапӑннӑ та 10 танк ҫунтарса янӑ. Каялла вӗҫсе таврӑннӑ чухне совет штурмовикӗсене нимӗҫ истребителӗсем атакӑланӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫура Носковпа Костицын стрелоксем тата летчик Шупаков кӗҫӗн лейтенант кашни пӗрер самолет персе ӳкернӗ. Нимӗҫсен 4-мӗш истребительне ушкӑнпа персе ӳкернӗ. Пирӗн самолетсем хӑйсен аэродромне пур те лайӑх ҫитсе ларнӑ. Тепӗр районра Шуляков майор ертсе пыракан 12 штурмовик пӗр чугун ҫул станцинче тӑшманӑн тин ҫеҫ вагонсем ҫинчен антарса лартнӑ танкӗсене атакӑланӑ. Иевский лейтенант, Липницкий лейтенант тата Черноус кӗҫӗн лейтенант, бомбӑсем ывӑтса тата тупӑсемпе персе, тӑшманӑн зенитнӑй батарейисене пусарса лартнӑ. Шуляков майор, Боканов капитан, Шонин старши лейтенант тата ытти летчиксем тӑшман танкӗсемпе эшелонӗсене пырса ҫапнӑ. Нимӗҫсен 4 танкне тата 20 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Станци территорийӗнче тӑнӑ эшелонсем хушшинче пушарсем тухнӑ, темиҫе тӗлте вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

* * *

Дунай шывӗн ҫурҫӗр хӗрринче, Естергом хулинчен ҫурҫӗртерехре, пирӗн ҫарсем, хӑватлӑн пырса ҫапса, тӑшманӑн Грон шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи оборонине татнӑ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, совет чаҫӗсем 20 километр ытла малалла кайнӑ. Пысӑк ялсем чылай туртса илнӗ, вӑл шутра—Мадар ялне. Мадар вӑл Чехословаки ҫӗрӗнчи Кормарно хулинчен, чугун ҫулсен тата шоссе ҫулӗсен пысӑк узелӗ пулса тӑраканскертен, 17 километрта ларать. Совет танкисчӗсем, пехотинецсем тата артиллеристсем, ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, фронтӑн ку участокне халь ҫеҫ пырса ҫитнӗ тӑшман пехотин дивизине пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Ҫавӑн пекех тата нимӗҫсен пирӗн наступление чарма хӑтланса ҫапӑҫӑва кӗртсе янӑ танковӑй чаҫне те аркатса тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан тӑшман ҫапӑҫу хирӗнче хӗҫпӑшал, техника тата вӑрҫӑ хатӗрӗсем нумай пӑрахса хӑварнӑ.

Елчӗкри крахмал завочӗ, 1944 ҫулхи производство планне 190 процент тултарса, республикӑри крахмал завочӗсем хушшинче малти вырӑна тухнӑ. Заводри чи лайӑх икӗ стахановкӑна **М. Т. Тихоновӑпа** тата **Е. Д. Агеева** юлташсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ Грамотипе наградӑланӑ. Завод директорне **И. А. Горшков** юлташа пӗр уйӑхри шалу чухлӗ преми панӑ.

Ӳкерчӗк ҫинче: Елчӗкри крахмал завочӗн директорӗ Горшков юлташ тата стахановкӑсем Тихоновӑпа Агеева юлташсем.

Вырӑнти удобренисем пухса хире кӑлармалли уйӑхлӑх

СЕНТЕР. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем вырӑнти удобренисем хатӗрлемелли уйӑхлӑха организованно пуҫӑнчӗҫ. Мӑн Хураҫка ял Советне кӗрекен «Пахарь» колхоз уйӑхлӑх пуҫланнӑранпа уя 700 лав тислӗк кӑларнӑ. Тӗрлӗ удобренисем пухма колхоза каникулра канакан шкул ачисем лайӑх пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем юлашки 5 кун хушшинче 14 центнер кӗл тата кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ нумай пухса панӑ.

Ярославкӑри Ленин ячӗпе тӑракан колхозра та вырӑнти удобренисем пухас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Кунта вӑрлӑхлӑх тырӑсене сортласа пӗтернӗ. Уя 1.000 лав ытла тислӗк кӑларнӑ. Унсӑр пуҫне, 27 центнер кӗл, 17 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ. Тислӗке уя кӑларас тата кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухас тӗлӗшпе кунта комсомолецсемпе ҫамрӑксем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсене комсомолец В. Ванюшкин ертсе пырать. Ҫак колхозӑн председателӗ Ф. Суворов юлташ вырӑнти удобренисем пухас ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ. Кунта кашни колхозникех кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухас тӗлӗшпе уйрӑм задани илнӗ. Колхоз хӑйӗн пилӗккунлӑх заданийӗсене ытлашшипех пурнӑҫласа пырать.

Анчах та районри хӑшпӗр колхозсенче вырӑнти удобренисем хатӗрлемелли уйӑхлӑх пыни туйӑнмасть-ха. Акӑ, Ильинкӑри «Осоавиахим» колхозах илер. Унта вӑрлӑх та хывса ҫитермен тата вӗсене сортласа та пӗтермен. Вырӑнти удобренисем пухма тытӑнман. Хӗле кӗнӗренпе тислӗк 100 лав ҫеҫ кӑларнӑ. Ҫак вӑхӑта ҫитсе те вӑрлӑхлӑх клевера ҫапман. Ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе «Гигант» колхозра та нимӗн те тумаҫҫӗ. Колхоз председателӗ Бабушкин юлташ: ҫуракине тухиччен вӑхӑт пур-ха, ӗлкӗрӗпӗр,—тесе ларать.

Г. МОИСЕЕВ.

* * *

Шӑхасан районӗнчи «Новая жизнь» колхоз (председателӗ Зверев юлташ) ҫуракине лайӑх хатӗрленет. Вӑрлӑх ҫителӗклӗ уйӑрнӑ, ӑна лайӑх сортласа хунӑ. Ялхуҫалӑх машинисене, ут таврашӗсемпе инвентарьсене юсаса пӗтернӗ. Халӗ кунта пикенсех вырӑнти удобренисем хатӗрлеҫҫӗ. Уйӑхлӑх пуҫланнӑранпа 200 лав тислӗк кӑларнӑ. 50 центнер кӗл тата 25 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ.

«Победа» колхоз та (председателӗ Захаров юлташ) ҫуракине начар мар хатӗрленет. 1.395 центнер вӑрлӑха сортласа хунӑ.

Халӗ унта пикенсех тислӗк кӑлараҫҫӗ тата кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, фекали пухаҫҫӗ.

П. КОЗЛОВ.

* * *

Ишлей районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз кӑҫал пур ӗҫсене те районра чи кайран туса пычӗ. Ку колхозӑн, ытти колхозсемпе танлаштарсан, ӗҫ вӑйӗпе турттӑм вӑйӗ те сахалах мар.

Колхоз кая юлса пыни пӗтӗмпех колхоза ҫителӗксӗр ертсе пынинчен, колхозра массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫе туса пыманнинчен килет.

Колхозри ялхуҫалӑх машинисем ӑҫта килнӗ, унта сапаланса выртаҫҫӗ, вӗсене юсаман, йӗркелемен.

Колхозра ӗҫе юратакан, колхозшӑн тӑрӑшакан колхозниксем нумай. З. Ильина, З. Кондратьева, А. Ершов, М. Воротникова юлташсем колхозра стахановла ӗҫлеҫҫӗ. Анчах вӗсене хавхалантармаҫҫӗ, вӗсен ӗҫри опычӗпе ыттисене паллаштармаҫҫӗ. Колхоз председателӗ Кушев айӑпламалли мерӑсене кӑна пӗлет, унтан «оштрафовать» текен сӑмахсене анчах илтме пулать.

Колхоз паян кун та авӑн ҫапса пӗтермен. Ҫуракине хатӗрленмеҫҫӗ. Вӑрлӑхсене сортласа хуман, вӗсен шӑтаслӑхне тӗрӗслемен, кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухма пуҫламан. Тислӗке уя кӑларас тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. И. Изановпа С. Ильин бригадирсем колхозниксене вырӑнти удобренисем пухмалли уйӑхлӑх ҫинчен ӑнлантарман.

Сталин ячӗпе тӑракан колхоз темиҫе ҫул каярах районра малта пыратчӗ. Вӑл малашне те ҫавӑн пек малта пытӑр тесен, руководителӗсен лайӑхрах ӗҫлемелле, колхоза ертсе пырас ӗҫе ватӑ тата опытлӑ колхозниксене явӑҫтармалла.

П. АРБАТОВ.

Юр тытас ӗҫе хакламан ҫӗрте

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Районри колхозсен 6000 гектар ытла юр тытса хӑвармалла. Анчах та тырӑ тухӑҫлӑхне ӳстермелли ҫак паха мероприятие нумай колхозсенче пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ. Пӗр «Красная Чувашия» колхозра кӑна 60 гектар ытла юр тытнӑ. «Восток», Комаровкӑри «Большевик», «Путь Ленина», XVI партсъезд, «Путь Маркса», Энгельс ячӗпе тӑракан колхозсенче юр тытас тесе нимӗн те тумаҫҫӗ. Ҫак колхозсенче иртнӗ ҫулсенчи щитсене ҫунтарса янӑ е ҫухатса пӗтернӗ.

«Путь Маркса» колхозра иртнӗ ҫул, юр тытманнине пула, кӗрхи тырӑсем чылай шӑнса пӗтрӗҫ. Иртнӗ ҫулхи йӑнӑша ҫак колхозӑн руководителӗсем асра тытмаҫҫӗ, вӗсем ҫаплипех: ӗлкӗрӗпӗр-ха, тесе лараҫҫӗ.

Юр тытас ӗҫе пур колхозсенче те халех тытӑнмалла, ҫак ӗҫе комсомолецсемпе шкул ачисене анлӑн явӑҫтармалла.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Клевер вӑрлӑхне ҫителӗклӗ хатӗрлемелле

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Районра малта пыракан колхозсем клевера вӑхӑтра ҫапса шӗкӗлчесе, лайӑх йышши вӑрлӑх ҫителӗклӗ таранах хатӗрлесе хучӗҫ.

Вӑрлӑх пахалӑхне хӑпартас тесе, «Труженик» колхоз шӗкӗлченӗ клевер вӑррине лайӑх тасатрӗ. Ку колхоз хӑйӗнчен ытлашши вӑрлӑха кӳршӗри «Путь социализма» колхоза сутрӗ. «Герой» колхоз та вӑрлӑх ҫителӗклӗ хатӗрлерӗ.

Анчах Акчикассинчи «Сталь» колхоз клевера халӗ те ҫапман. 2,5 центнер вӑрлӑх хатӗрлемелле пулсан, паянхи куна пӗр пӗрчӗ те хатӗрлемен. Уйпуҫӗнчи Энгельс ячӗпе тӑракан тата «Крестьянин» колхозсем те клевера халӗ те ҫапман, вӑрлӑх та хатӗрлемен.

Юлса пыракан колхозсен малтисемпе танлашмалла, клевера хӑвӑртрах ҫапса шӗкӗлчемелле. Кашни колхозӑн клевер вӑрлӑхӗ ҫителӗклӗ пултӑр.

П. ТИХОНОВ.

Колхозсене пулӑшатпӑр

СЕНТЕРВАРРИ. 1944 ҫулхи тӑваттӑмӗш кварталта пирӗн трактористсемпе трактористкӑсем тракторсене юсас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлерӗҫ. Тракторсем юсамалли плана 100 процентпа тултартӑмӑр. Нумаях пулмасть пирӗн МТС-ра пуху пулса иртрӗ. Унта эпир Украина ССР-ӗнчи Старо-Бешевски МТС коллективӗ чӗнсе каланине сӳтсе-яврӑмӑр. Пирӗн трактористсем тата трактористкӑсем мартӑн 1-мӗшӗ тӗлне мӗнпур тракторсемпе вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене юсаса пӗтерме обязательство илчӗҫ. Халӗ эпир МТС ҫумӗнче курс организацилерӗмӗр. Ҫав курсра 30 тракторист, 4 комбайнер вӗрентсе кӑларма йышӑнтӑмӑр.

МТС сывӑхӗнчи «Большевик» колхоза плугсем юсаса парса пулӑшас тетпӗр. Вӗсен 14 плугне хамӑр патӑра илсе килсе юсама тытӑнтӑмӑр.

П. ЮНКЕРЕВ.

И. В. Сталин Мексика посолне Л. Кинтанийа господина йышӑнни

Январӗн 6-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Мексикӑн Совет Союзӗнчи Посолне Л. Кинтанийа господина йышӑннӑ.

Йышӑнура СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов пулнӑ.

СССР Верховный Совет Президиумӗн секретарӗ А. Горкин юлташ калани

Ют ҫӗршывсенчи хаҫатсенче юлашки вӑхӑтра ҫакӑн пек хыпар сараҫҫӗ: Польша Халӑх Совечӗн Президентне Берут господина Пилсудскин фашистла режимӗ вӑхӑтӗнче арестленӗ пулнӑ та, СССР-па Польша Правительствисем килӗшнипе, СССР тӗрминчи пӗр полякпа улӑштарнӑ пулать.

СССР Верховный Совет Президиумӗ хушнипе, ҫав хыпарсем нихӑш енчен те тӗрӗс марри ҫинчен пӗлтерме кирлӗ тесе шутлатӑп.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

1945 ҫулхи январӗн 7-мӗшӗ.

ЮБИЛЕЙ ТӖЛНЕ А. С. ГРИБОЕДОВ ПРОИЗВЕДЕНИЙӖСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КӐЛАРАҪҪӖ

А. С. Грибоедов ҫуралнӑранпа 150 ҫул тултарнӑ тӗле Илемлӗ литературӑн государство издательстви А. С. Грибоедовӑн «Горе от ума» ятлӑ комедине 100.000 кӗнеке кӑларать. Ана пичете панӑ та ӗнтӗ. Юбилей кунӗсем тӗлне вырӑссен аслӑ писателӗсен пурнӑҫӗпе творчестви ҫинчен С. М. Петров ҫырнӑ кӗнеке пичетленсе тухать. Гослитиздатӑн Ленинградри отделенийӗ январь уйӑхӗнче Грибоедов сочиненийӗсен пӗр томне тата унӑн творчестви ҫинчен брошюра кӑларать. (ТАСС).

СТАЛИНГРАД ХУЛИН ТӖП ПЛОЩАЧӖН ПРОЕКЧӖСЕН ВЫСТАВКИ

Январӗн 3-мӗшӗнче Мускавра, Архитекторсен ҫуртӗнче, Сталинград хулин тӗп площачӗн тата Сталинграда хӳтӗлекенсен ячӗпе тумалли монументӑн проекчӗсен выставки уҫӑлнӑ. Выставкӑна Мускав, Ленинград, Свердловск, Куйбышев, Эреван, Баку, Владивосток архитекторӗсен проекчӗсене тӑратнӑ. Вӑл проектсене авторсем СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Архитектура комитечӗпе Совет архитекторӗсен союзӗ туса ирттернӗ конкурса хутшӑнса хатӗрленӗ.

Ҫывӑхри кунсенчех конкурс жюрийӗ лайӑх проектсене премилеме суйласа илет. (ТАСС).

БЕЛОРУССИ ШКУЛӖСЕМ ВАЛЛИ ПЕДАГОГИКА КАДРӖСЕНЕ ХАТӖРЛЕНИ

Педагогсем хатӗрлес тӗлӗшпе Белоруссире шкулсем нумай уҫнӑ. Институтсенче, училищӗсенче тата тӗрлӗ курссенче 10.000 ҫынна яхӑн вӗренеҫҫӗ. Область хулисенче пуринче те педагогсен квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе ӗҫлекен институтсем уҫнӑ. Вӗсенче 30.000 учителе яхӑн хӑйсен квалификацине ӳстереҫҫӗ. Учительсенчен нумайӗшӗ заочнӑй йӗркепе педагогика институчӗсенче вӗренеҫҫӗ. (ТАСС).

КОЛЫМА ТАЙГИНЧИ КӖЛЕНЧЕ ЗАВОЧӖ

Магадан хулин магазинӗсенче тата тайгари поселоксенче кӗленче графинсем, стакансем тата ытти савӑт-сапа сутма пуҫланӑ. Вӗсене Колымарах тӑваҫҫӗ.

Магадан хулинчен темиҫе километрта тайгара вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пӗрремӗш кӗленче заводне туса ӗҫе янӑ. Кашни уйӑхрах производство технологийӗ лайӑхланса пырать, туса кӑларакан продукцин пахалӑхӗ ӳссех пырать.

Кӗленче заводӗнче Колымари ӗҫсыннисем валли нумай япаласем тунӑ. Вӗсене ӗлӗк Колымана пиншер километртан турттарса пынӑ. (ТАСС).

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗнчен

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ вырӑссен питех те паллӑ ученӑйӗ—геолог тата геофизик Владимир Иванович Вернадский академик вилни ҫинчен хуйхӑрса пӗлтерет. Вӑл йывӑр чирленӗ хыҫҫӑн ҫак ҫулхи январӗн 6-мӗшӗнче вилнӗ.

СССР СОВНАРКОМӖ.

Государствăн вырăнти органĕсен ĕçне вăйлатар!

Ял Совечĕсем социализмлă государствăн халăхпа чи çывăх çыхăнса тăракан органĕсем пулса тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра ял Совечĕсем умĕнче çуракине хатĕрленес, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртес тата ĕç-çыннисене Хĕрлĕ Çара пулăшма мобилизацилес ответлă ĕçсем тăраççĕ. Çав ĕçсене пурнăçа кĕртесси ял Совечĕсен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать.

Пирĕн республикăри нумай ял Совечĕсем хăйсен задачисене лайăх пурнăçласа пыраççĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ нумай пулмасть Куславкка районĕнчи Аманик ял Советне «Республикăри малта пыракан ял Советне» ятлă куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав парасси çинчен Указ кăларчĕ. Асăннă ял Совечĕ умра тăракан задачăсене пурнăçлама ĕçсыннисене, активна анлăн мобилизацилет. Актив ял Совет исполкомĕ çумĕнчи ялан ĕçлекен бюджет, ялхуçалăх тата культура комиссийĕсенче пĕрлешсе тăрать. Комисси членĕсем ял Советне кĕрекен колхозсенче укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пынине, çуракине хатĕрленес, шкул çулне çитнĕ ачасене вĕренĕве явăçтарас ĕçе мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăраççĕ. Мĕнле те пулин ĕç кая юлни палăрсан, комисси членĕсем пĕрле пухăнса, вăл ĕçе лайăхлатмалли мерăсене йышăнаççĕ те, ун çинчен ял Совет исполкомĕн председательне пĕлтереççĕ. Ял Совет исполкомĕн председателĕ çав ыйтăва сӳтсе-явма лару пухать. Лару йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине комисси членĕсем урлă тĕрĕслесе пыраççĕ.

Аманик ял Совечĕ хăйĕн территорине кĕрекен колхозсемпе учрежденисен ĕçне тĕплĕн шутласа тунă план тăрăх организацилесе пырать. Çавна пула çав ял Советне кĕрекен колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, государство умĕнчи парăмсене срокра тултараççĕ. «Динамо» колхоз иртнĕ çулта тырпул тухăçлăхне ӳстермелли плана ытлашшипех пурнăçланă, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарнă. Унсăр пуçне вăл Хĕрлĕ Çар фондне тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 1.860 пăт тырă панă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та пĕтĕмпех тултарнă. Финанс планне срокра пурнăçа кĕртнĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарнă.

Куславкка районĕнче çавăн пек лайăх ĕçлекен ял Совечĕсем татах та пур. Ку ĕнтĕ ял Совечĕсен ĕçне райсовет исполкомĕ тĕрĕс ертсе пынинчен килет. Иртнĕ çулта райсовет исполкомĕ (председателĕ Прытченков юлташ) ял Советсен ĕçне лайăхлатас ыйтăва темиçе те сӳтсе-явнă.

Ишлей райсовет исполкомĕ те (председателĕ Петров юлташ) ял Советсен ĕçне тивĕçлипе ертсе пырать. Унта ял Совет председателĕсемпе секретарĕсене ĕçре тĕл пулакан ыйтусене сӳтсе-явма семинарсене чĕнеççĕ. Семинарсем кашни уйăхрах пулса иртеççĕ. Малта пыракан ял Совечĕ валли райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тунă. Вăл ялава уйăх вĕçĕнче, ял Советсен ĕçне тĕплĕн тишкерсе тухнă хыççăн, малта пыракан ял Советне параççĕ.

Хăшпĕр районсенче ял Советсене ертсе пырас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен-ха. Çавна пула вара ял Совечĕсем, хăйсен территорийĕсенчи колхозсемпе учрежденисене ертсе пырас вырăнне, сведенисем пухакан орган кăна пулса юлаççĕ. Акă, Елчĕк районĕнчи Курнавăш ял Советне илер. Унта ялан ĕçлекен комиссисем çук. Ял Совет ĕçне активна хутшăнтарман, депутатсене нимĕнле ĕç те хушмаççĕ. 1944 çулта колхозсем мĕнле ĕçлени, государство умĕнчи парăмсене пурнăçлани тата шкулсен ĕçĕсем çинчен ял Совет ларăвĕнче пачах та сӳтсе-явман. Тĕрĕссипе илсен, унта ларусем те пулман. Çавăн пекех Çĕрпӳ районĕнчи Тĕнсĕр ял Совечĕ те ларусене йĕркеллĕ ирттермест, ялти активна ĕçе хутшăнтармасть. Унта ялан ĕçлекен комиссисене пĕтĕмпех салатса янă. Начар ĕçлекен ял Совечĕсем Шăхасан, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Пăрачкав районĕсенче те пур.

Ял Совечĕсем начар ĕçлени мĕнрен килет-ха? Вăл, чи малтанах, ял Совечĕсен председателĕсем начар ĕçленинчен тата райсовет исполкомĕсем вĕсене çителĕксĕр ертсе пынинчен килет. Нумай ял Совет председателĕсем çапла шутлаççĕ: колхоз районри çĕрĕç пайне, шкул çутĕç пайне, фельдшер пункчĕ сывлăх пайне пăхăнса тăраççĕ, çавăнпа та эпир вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслеме тата пăхса тухма пултараймастпăр, теççĕ. Çакăн пек шутлани вăл ял Совечĕн пĕлтерĕшне ăнланманни пулать. Ял Совечĕсем хăйсен территорийĕнчи колхозсемпе шкулсене, учрежденисене культурăпа политика тĕлĕшĕнчен ертсе пыракан органсем пулса тăраççĕ. Апла пулсан, ял Совечĕсем хăйсен территорине кĕрекен колхозсемпе шкулсен тата учрежденисен ĕçне, районран пулăшассине кĕтмесĕрех, куллен тĕрĕслесе тăмалла, вĕсене кулленхи ĕçре пулăшмалла. Ял Совет территорине кĕрекен колхозсемпе учрежденисем пирки йышăннă решенисем çинчен райсовет исполкомне çийĕнчех пĕлтермелле.

Ял Совет исполкомĕпе районри учрежденисем хушшинче çирĕп çыхăну пулмалла. Çакă вăл ял Совечĕн авторитетне çĕклеме пулăшать. Çак ĕçе хăшпĕр райсовет исполкомĕсен руководителĕсем те тĕрĕс ăнланмаççĕ-ха. Райсовет исполкомĕнче шкул е колхоз ĕçне пăхса тухнă чухне ял Совет председательне чĕнмеççĕ. Райсовет исполкомĕн отделĕсем ялсенчи учрежденисене ял Совечĕпе çыхăнмасăрах ертсе пыма пикенеççĕ. Çаксене пула вара ял Совечĕсем кирлĕ ĕçсен тулашĕнче тăрса юлаççĕ.

Ял Совет председателĕсен çакна пĕлсе тăмалла: ял Совет территорийĕнчи колхоз, шкул тата ытти учрежденисем ял Советне тата райсовет исполкомĕн отделне пăхăнса тăраççĕ. Колхозсемпе шкулсем тата ялти учрежденисем вĕсем хушнине пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ.

Райсовет исполкомĕсен ял Совечĕсене ертсе пырассине тĕпренех вăйлатмалла. Çакна тума ял Совечĕсем хăйсен территорийĕнчи колхозсемпе учрежденисене мĕнле ертсе пыни çинчен райсовет исполкомĕн ларăвĕнче итлес ĕçе йĕркелемелле, райсовет исполкомĕнче ял Советсен ĕçне асăрхаса пыракан çынсем уйăрмалла.

Ял Советсен ĕçне куллен тĕрĕслесе пырса тата вĕсене кулленхи ĕçре пулăшса пырса, совет государствин вырăнти органĕсен—ял Совечĕсен ĕçне лайăхлатмалла.

П. ИВАНОВ.

Колхозра хĕрӳллĕ ĕç пырать

Кас пулас умĕн Шупашкаркассинчи «Большевик» колхоз колхозникĕсем правленине пухăннă. Унта, хăйсен пухăвĕнче, вĕсен, Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклада сӳтсе-явса, çулпуç кăтартса панисене пурнăçа кĕртмелли майсене палăртмалла пулнă.

Пуху уçăлас умĕн, уйрăмăнах тата пухура, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Пидуганов юлташ Сталин юлташĕн докладĕпе приказĕ çинчен доклад туса панă хыççăн, колхозниксемпе колхозницăсем çĕнĕ çулта мĕнле ĕçлесси пирки нумай калаçнă. Юлашкинчен вара, колхозри майсене тĕплĕн шута илсе виçсе пăхнă хыççăн, вĕсем пĕр кăмăлпа çапла йышăннă: лайăх тырпул туса илнĕшĕн, тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнăшăн райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ панă куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава 1945 çулта та хамăр алăрах хăваратпăр. Çĕнĕ çулта кашни сăвакан ĕнерен 1.100 литр сĕт, кашни сурăхран 2,5 килограмм çăм, кашни кĕсререн пĕр тиха, 10 сыснаран 100 çăвăр илетпĕр. Кашни гектар çĕр лаптăкĕ çинчен 12.5 центнер тĕштырă, 110 центнер çĕрулми туса илетпĕр.

Колхозниксен пухăвĕ пулса иртнĕренпе пĕр уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Çав хушăра колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем çĕнĕ çулта пурнăçа кĕртме палăртнă ĕçсене пурнăçлас тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем тунă, тăваççĕ те.

— Вăрлăхсем хатĕр, — пĕлтерчĕ колхоз председателĕ Филипп Трофимович Паймамов,—машинăсемпе плугсене, урапасене юсасси те лайăх пырать, агротехникăллă мероприятисене пурнăçлатпăр.

Унтан вăл хăйĕн сăмахĕсене çирĕплетсе пама тĕрлĕ цифрăсем илсе кăтартрĕ.

Бригадăсене, фермăна, вулав çуртне пырсан та, колхозниксем патне кĕрсен те хальхи вăхăт канса пурăнмалли вăхăт мар, хĕрӳллĕ ĕç тапхăрĕ пулнине туятăн.

Колхозра хĕрӳ ĕç ирхине ирех пуçланать. Çамрăксем те, ватă колхозниксемпе колхозницăсем те кашниех хăйсен ĕçне тăваççĕ. Хĕшĕсем юр тытаççĕ, уя тислĕк кăлараççĕ, вутă турттараççĕ, теприсем лаша кӳлмелли хатĕрсене юсаççĕ. Ку тариччен уя вăкăрсемпе кăна 400 лава ялан тислĕк кăларнă. Хĕрӳ ĕç хыççăн вара, касхине, вĕренӳ пуçланать. Колхозниксем вулав çуртне пырса хаçат-журналсем вулаççĕ, тĕнчери лару-тăрупа паллашаççĕ. Культурăллă-массăллă ĕçе ялти актив туса пырать.

Колхоз вăрçă çулĕсенче те хăйĕн хуçалăхне пĕрмаях аталантарса пырать. Иртнĕ çулта кăна дезинфекци камери, çăл, тырă склачĕ тунă, çил арманне юсанă, ферма патне каймалли çула тунă.

Колхозниксемпе колхозницăсем тимлĕн тăрăшса ĕçлени кăçал та вăйлă тырпул туса илесси çине шанса тăма май парать.

М. ТИТОВ.

Ишлей районĕ, «Большевик» колхоз.

МУЗЕЙ ПУРЛĂХНЕ КАЯЛЛА ИЛСЕ КИЛНĔ

Кишинева Румынирен Кишиневри краеведени музейĕн япалисене икĕ вагон турттарса килнĕ. Вăл пурлăха оккупаци вăхăтĕнче Румыни оккупанчĕсем илсе тухса кайнă пулнă. Каялла илсе килнĕ экспонатсем хушшинче искусство произведенийĕсем, кавирсем, авалхи хĕçпăшалсем пур.

Музей пурлăхĕ тата темиçе вагон килессине кĕтеççĕ. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ январĕн 5-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Январĕн 5-мĕшĕнче союзниксен патрулĕсем Маас шывĕ тăрăхĕнче хытă кĕрешнĕ. Тăшман хытă хирĕç тăрать пулин те, Арден савăлĕн çурçĕрти флангĕнче союзниксен çарĕсем тăшмана çаплах хĕссе пынă.

Арден савăлĕн кăнтăр флангĕнче нимĕçсем çав-çавах хытă хĕснĕ, вĕсем куçти контратакăсене танксемпе пехота кĕрте-кĕрте янă. Мишана хули районĕнче союзниксен çарĕсем Бастонь хулинчен икĕ миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри çӳллĕ вырăна çитсе чакнă. Бастонь хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Варден хули таврашĕнче союзниксен артиллерийĕ тăшманăн наступлени тăвакан пехотипе танкĕсене сапаласа янă.

Анатри Вогез тăвĕсем çинче кунĕпех хаяр çапăçусем пынă. Тăшман Битш хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре хăйĕн савăлне аслăлатма хăтланнă, анчах та нимĕçсен ĕçĕ пăчланса ларнă. Винген хули таврашĕнче кăнтăралла кĕрсе кайнă тăшман чаçĕсене пĕтерсе тăкнă.

Страсбург хулинчен 8 мильăра тăшман вăйĕсем Рейн шывĕ урлă каçса кайнă та Оффендорф хулине кĕнĕ, халĕ çапăçусем хулара пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ çапăçусен районĕнче хытă кĕрешнĕ тата тăшман çулйĕрĕсене тапăннă. Пĕр пин ытла йывăр бомбардировщик, 500 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, Кельн хулипе Карлсруэ хули хушшинчи тата Зигфрид линийĕпе Франкфурт хули хушшинчи чугун çул центрĕсене тапăннă. Йывăр бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Людвигсхафен хулинчи сортировка станцийĕсене тапăннă. Январĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем икĕ хутчен Ганновер хулине тапăннă. Çăмăл бомбардировщиксем Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ январĕн 6-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армин сылтăм флангĕнче канадецсен малти чаçĕсем Рено шывĕ çине тухнă, Сан Альберто хулине йышăннă. 8-мĕш армин ытти чаçĕсем Сенио шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре (Котиньола хулинчен кăнтăртарахра) тăшман организованно хирĕç тăнине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартнă. 5-мĕш арми фронтĕнче патрульсем çеç тытăçа-тытăçа илнĕ.

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ январĕн 7-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем тăшманăн Арден савăлĕн çурçĕрти фронтĕнче, Ставло хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çаплах хĕссе пынă. Союзниксен чаçĕсем Амблэв шывĕ урлă каçнă хыççăн атака тунă та 3.000 ярд малалла кайнă. Кунтан кăштах хĕвеланăçнерехре Одень тата Льерне ялĕсене туртса илнĕ. Сент-Юбер хулипе Бастонь хули хушшинчи çултан çурçĕртерехре Сент-Юбер хулинчен икĕ миля хĕвелтухăçнерехре союзниксем Тилье хули патне çитнĕ. Вильц хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Эшдорф хулинчен пĕр миля çурă çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Сюр шывĕ урлă каçнă та Гесторд тата Даль пункчĕсене тăшмантан тасатнă. Ытти чаçсем тăшманăн Битш хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри савăла пĕчĕклетсе пынă. Рейпертвейлер хулинчен çурçĕртерехре атака туса, тăшман савăлĕн чи кăнтăрти пункчĕ çывăхĕнче союзниксем 1.000 ярд ытла малалла кайнă. Винген хулине кĕрсе кайнă тăшман çарĕсен юлашкийĕсене хупăрласа илнĕ.

Рейн шывĕн хĕвеланăç хĕрринче январĕн 4-мĕшĕнче çав шыв урлă каçса кайнă тăшман чаçĕсене пур тĕлте те пĕтерсе тăкнă. Пĕр Гамбсхейм хулинче кăна тăшман унччен пекех хытă хирĕç тăнă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, йышлă истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Кельн хулипе Бонна хулинчи Рейн шывĕ çинчи кĕперсене, Кельн, Кобленц тата Людвигсхафен хулисенчи сортировка станцийĕсене, фронт линийĕ çывăхĕнчи чугун çул узелĕсемпе депосене атакăланă.

Çапăçу районĕсенче çанталăк начар тăнă пирки сывлăшра вăйлă çапăçма май килмен.

Январĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Германие çĕнĕрен тапăннă. Пуринчен те ытларах чугун çулсен тата промышленноçăн паха центрĕ пулса тăракан Ганау хулине тапăннă.

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ январĕн 7-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армири Канада çарĕсем Равенна хулинчен 9 миля çурçĕртерехре Вэлли ди Комаккио хули районĕнче тинĕс хĕррине тухнă. Малалла хăвăрт куçса пынине пула кунта тăшман отрячĕсене нумай татса илнĕ.

5-мĕш арми секторĕнче, хĕллехи йывăр условисене пула, вăйлă çапăçма май килмен.

Çанталăк начар тăни ĕнер сывлăшра çапăçма кансĕрленĕ.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç Боснире хаяр çапăçусем хыççăн Югослави чаçĕсем Вареш хулине ирĕке кăларнă. Кунта рудниксем пур. Соколацпа Власеница хушшинчи çул çинче тата Лим улăхĕнче çапăçусем пыраççĕ.

Герцеговинăра тăшман Невесинепе Широки Бриегран тухса тапăнма хăтланнисене сире-сире пăрахнă.

Босна улăхĕнчи Травник районĕнче нимĕçсем çурçĕрелле куçма хăтланнисене сире-сире пăрахнă.

Подравинра, Вировитица — Дюрдевац районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нумай вăйсем илсе пынă нимĕçсем унта хытă хĕсеççĕ.

Югослави партизанĕсен отрячĕсем январьти 6 кун хушшинче Загребра тĕп вокзал патĕнчи нефть тасатакан завода тата нефть склачĕсене сирпĕнтерсе янă. Çавăн пекех партизансем 5 поезд сирпĕнтернĕ.

Словенире, Люблян—Ново Место çулĕ çинче, тăшманăн 6 пысăк колонни атакăланине сирсе пăрахнă.

С. Модзелевский господина Польша республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ пулма лартнă

ЛЮБЛИН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăхĕн Совечĕн президенчĕ С. Модзелевский господина Польша республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ пулма лартнă.

ГИТЛЕРЛА ПУÇЛĂХСЕМ ХĂЙСЕН КАПИТАЛĔСЕНЕ КУÇАРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Англири радиовĕ çапла пĕлтерет: Швейцарирен пĕлтернĕ тăрăх, гитлерла пуçлăхсем Швейцарие ăсатнă капитал хальхи вăхăтра 2 миллиард маркăна çитет. Юлашки ернесем хушшинче вĕсем Швейцарие уйрăмах нумай капитал ăсатнă.

Рузвельт конгреса янă çыру

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, конгреса янă çырура президент Рузвельт Пĕрлешӳллĕ Штатсен лару-тăрăвĕ çинчен çапла каланă: «Çак çĕнĕ çулта эпир этемлĕх историйĕнче çав тери пысăк çитĕнӳсем пулма пултараççĕ», тенĕ.

«Тулашри политика тĕлĕшĕнчен, — тенĕ çырура, — эпир вăрçă вăхăтĕнче кăна мар, вăрçăра çĕнтерсен те Пĕрлешӳллĕ Нацисемпе пĕрлех пуласшăн. Пире пĕрлехлĕ хăрушлăх кăна мар, пĕрлехлĕ шанчăк та çыхăнтарса тăрать. Пирĕн пĕрлешӳ вăл правительствăсен пĕрлешĕвĕ мар, халăхсен пĕрлешĕвĕ пулса тăрать. Халăхсен шанчăкĕ — мир. Ку вăрçăра пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле, çапла кĕрешетпĕр те эпир. Пирĕн алăра мĕн пуррипе пуринпе те эпир усă куратпăр, эпир нимĕн те шеллемĕпĕр. Хамăр çĕнтересси пирки эпир иккĕленместпĕр. Мĕнле хакпа çĕнтерессине те эпир пĕлсех тăратпăр. Пирĕн йывăр çухатусем пулĕç. Хамăр союзниксемпе пĕрле эпир татăклăн çĕнтериччченех кĕрешме пулатпăр».

Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕçсем пуçласа янă контрнаступлени çинчен Рузвельт çапла çырнă: «Çак наступление Эйзенхауэр пĕр шикленмесĕр кĕтсе илчĕ. Вăл халь çитĕнӳсем тума пуçлать. Эпĕ ăна пур енчен те шанатăп. Эпир малалла каяссине вăрахлатас шутпа нимĕçсем пирĕн линие татма тем пекех тăрăшĕç. Юлашки нациста парăнтариччен нимĕçсене çĕнтертĕмĕр тесе шутлама нихăçан та юрамасть».

Хăйĕн çырăвĕнче Рузвельт «тăшман пропагандинчен сыхланма кирлине» палăртнă. «Нимĕçсем пирĕнпе пирĕн союзниксем хушшинче сапса кĕртме хăтланакан савăлсем вĕсем Хĕвеланăçĕнче çапса кĕртнĕ савăлтан темиçе хут та хăрушăрах», тенĕ.

«Европăра эпир, — тенĕ малалла çырура,—каллех наступлени пуçласа яратпăр. Вырăнĕ-вырăнĕпе ăнăçсăрлăхсем пулнă пулин те, эпир Германие тĕпренех аркатса тăкиччченех пыра-пыра çапăпăр. 1940—1941 çулсенче Англи тăр-пĕччен çапăçнине, ун çине сывлăшран бомбăсем вăйлăн пăрахса тăнине пăхмасăрах, вăл хăватлă çар промышленноçĕ туса, 1942 çулта Эль-Аламейн патĕнче наступлени пуçласа яма пултарнине эпир манма пултараймастпăр. Çавăн пекех эпир Мускава, Ленинграда, Сталинграда паттăррăн хӳтĕленине те, вырăссен çав тери пысăк наступленийĕсене те манма пултараймастпăр. Çав çапăçусене пула нимĕçсен пысăк армийĕсене аркатса тăкнă. Хамăр туяннă урока пирĕн малашне нихăçан та манмалла мар. Вăрçă вăхăтĕнче кăна мар, мирлĕ тапхăрта та пире хамăрпа пĕрлешсе ĕçлекен туссем кирлĕ». Малалла çырура Лăпкă Океан таврашĕнчи вăрçă çинчен каланă.

Пĕрлешӳллĕ Штатсенче производствăна ӳстерме чĕнсе, Рузвельт малашне çар хатĕрсен тăкакĕ кашни кунах ӳссе пырасси çинчен каланă. Çар производствинче ĕçлекен кашни американецах ĕçре юлмалла, çав производствăна çĕнĕ çынсем хутшăнтарса пымалла. «Иртнĕ çулта эпĕ, — тенĕ çырура,—çар производствине демократилле майсемпе ăнăçлăн аталантарма пулăшакан халăх повинноçĕ çинчен закон йышăнма сĕнĕччĕ. Вăл сĕнĕве ун чухне йышăнмарĕç. Халĕ эпĕ каллех çав ĕçе хăвăртрах пурнăçлама чĕнетĕп».

Тулашри политика ыйтăвĕсем çинче чарăнса, Рузвельт демократилле çĕршывсем хушшинче хирĕçӳсем пулмалла марри çинчен каланă. «Вăрçă кăларса тăратнă обязательствăсене пурнăçлассинчен эпир пăрăнмарăмăр, — тенĕ çырура. Вăрçăпа çыхăнса тăракан политикăллă обязательствăсене пурнăçлассинчен те çавăн пекех эпир пăрăнма пултараймастпăр, пăрăнмастпăр та. Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе пирĕн союзниксем хушшинчи хирĕçӳсемпе усă курма хăтланнинчен е вăл хирĕçӳсене ӳстерсе кăтартма хăтланнинчен пирĕн сыхланас пулать. Ку ĕнтĕ, чи малтан, фашистла пусмăртан ирĕке тухнă халăхсем çинчен пыракан ыйтăва тивет».

СОВЕТ СОЮЗĔН ЯПАЛИСЕНЕ РУМЫНИРЕН КАЯЛЛА ТАВĂРСА ПАНИ

БУХАРЕСТ, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Контроль Комиссийĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Румынирен Киева Румыни оккупанчĕсем Совет Союзĕнчен çаратса илсе кайнă пурлăха 54 вагон ăсатнă. Çав япаласем хушшинче сехет завочĕн оборудованийĕ, 12 вагон станоксем тата кабель, çыхăну япалисемпе радиооборудовани, строительство материалĕсем, çăмăл промышленность чĕртаварĕ, медикаментсем, 19 вагон тĕштырă, 10 вагон металлом тата ыттисем те.

Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Румынирен Совет Украинине 7.333 пуç шултăра выльăх, 2.200 лаша, 17.238 сурăх тавăрса панă.

ВЕНГРИН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ЙЫШĂННИ

ДЕБРЕЦЕН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Хăйĕн черетлĕ ларăвĕнче Венгрин Вăхăтлăх Правительстви государство аппаратне тасатасси çинчен, çавăн пекех хуласемпе ялсенчи самоуправлени аппарачĕсене тасатасси çинчен калакан декрета çирĕплетнĕ. Çав декрет тăрăх, уйрăм комиссисем ирттерекен тасату урлă пур чиновниксен те тухмалла пулать. Вăл комиссисене никама пăхăнманлăх фронтне кĕрекен пур партисемпе организацисен представителĕсем тата правительство уйăрса лартнă çынсем кĕреççĕ.

АЛЕКСАНДЕРПА МАКМИЛЛАН АФИНЫ ХУЛИНЕ ПЫНА

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Александер фельдмаршал тата Англин союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çумĕнчи министр-резиденчĕ Гарольд Макмиллан январĕн 6-мĕшĕнче Афины хулине пынă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ВАШИНГТОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 2-мĕшĕнче Америка çарĕсем Каролин утравĕсен хĕвеланăç пайĕнче Фейс утравĕ çине аннă. Японецсем хирĕç тăрса вăйлă çапăçайман.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти электромеханически техникумра техникум курсĕшĕн экстернат йĕркипе экзамен пама ыйтса çырнă заявленисене йышăнаççĕ.

Заявленисене вăтам шкулта çичĕ çултан кая мар вĕреннĕ тата производствăра икĕ çултан кая мар ĕçленĕ çынсенчен пуринчен те йышăнаççĕ. Заявленисене çулталăк тăршшĕпех йышăнаççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

5—1

Çуракине хатĕрленес ĕç тата районри хаçатсем

Халĕ колхозсемпе МТС-сем умĕнче тăракан чи пысăк задача вăл—çуракине большевикла хатĕрленсе кĕтсе илесси. Çакăнтан пысăкрах ĕç колхозсемпе МТС-сенче халĕ урăх çук. Çурхи ака ĕçĕсене эпир мĕн чухлĕ хăвăртрах та лайăхрах туса ирттерĕпĕр, тухăçлă тырпул туса илме пирĕн çавăн чухлĕ ытларах шанчăк пулĕ. Çураки вăл—вăйлă тырпулăн никĕсне хывса хăвармалли тапхăр. Ялхуçалăхĕнчи çак питех те хĕрӳллĕ тапхăрта пирĕн колхозсемпе МТС-сем ăнăçлă ĕçлеччĕр тесен, çуракине халех тĕплĕн хатĕрленни кирлĕ.

Паллах ĕнтĕ, çакна май районри хаçатсем умне те ответлă задачăсем тухса тăраççĕ. Ĕççыннисене чи çывăх тăракан, çавăнпа вĕсемпе тачăрах çыхăнса ĕçлекен хаçат вăл—районри хаçат пулса тăрать. Апла пулсан, яллă вырăнта тухакан районри хаçатăн колхозсен кулленхи ĕçне тĕплĕнрех çутатса тăма та, вĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçе пуçарса пыма та майсем ытларах.

Республикăри нумай колхозсем иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче лайăх ĕçлерĕç, вăйлă тырпул туса илчĕç. Çак ĕçре вĕсене партипе совет организацисем куллен ертсе пычĕç, районри хаçатсем те сахал мар пулăшу пачĕç. Красноармейски район иртнĕ çулта республикăри малта пыракан районсенчен пĕри пулчĕ. Çак районри «Коммунизм çулĕ» хаçат та хăйĕн районне тивĕçлĕ ĕçлерĕ, колхозсенчи уйхир ĕçĕсем çинчен пĕлсе çутатса пычĕ, лайăх ĕçлекен колхозсен примерĕпе ыттисене вĕрентме тăрăшрĕ, начар ĕçлекенсене çитменлĕхсем çинчен асăрхаттарса тăчĕ. Хаçат кăçал та çуракине хатĕрленес ĕçĕн ответлăхне лайăх туйса тăрать. Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнчех ĕнтĕ вăл кăçалхи çуракине хатĕрленес ыйтусем çинчен çырма тытăннă. «Вăрлăх фончĕ хывса çитертĕмĕр», «Тракторсене лайăх пахалăхпа юсаса кăларар», «Гектартан 18 центнер тĕштырă туса илессишĕн кĕрешетпĕр», «7 гектар çинче юр тытнă», «Кунта вăйлă тырпулшăн кĕрешмеççĕ», «Çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатрĕç»,—çакăн пек заметкăсем пичетлесе пырать хаçат номертен номере. Декабрĕн 7-мĕшĕнчех «Коммунизм çулĕпе» хаçат «Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн—кĕрешĕве» ятлă умстатья пичетлесе кăларнă. Юлашки номерсенче вара вăл çураки ыйтăвĕсене тĕп вырăна хурса çутатса пырать.

Çапла тума кашни районри хаçатах пултарать тата пултармалла та. Хаçат работникĕсем хăйсен тĕп задачине ăнланса илнĕ пулсан, вĕсем район пурнăçĕн пуçĕнче пыма тăрăшаççĕ пулсан, çавăн пек тăваççĕ те: çуракине хатĕрленесси çинчен ака ĕçĕсем пуçланас умĕн тин мар, халĕ ытларах çырма тăрăшаççĕ. Ку ĕнтĕ ытла та ăнланмалла япала, çавăнпа та вăл чăнлăха пĕлмен юлташсем хаçат работникĕсем хушшинче çукрах та пулĕ. Пĕлеççĕ, анчах манаççĕ, шăпах çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр хаçатсем пурнăçран кая тăрса юлаççĕ те, колхозри пĕр-пĕр учетчик пек, фактсене тата пулса иртнĕ ĕçсене регистрацилесе пыраççĕ. Çуракине хатĕрленес ĕçре çавăн пек хаçатсен йышĕ чылаях пысăк. «Çитес çулхи çуракине хатĕрленес ĕç колхозсенче пуçланманпа пĕрех» тесе çырать Чурачăк районĕнчи «Çĕнтерӳшĕн» хаçат хăйĕн пĕр номерĕнче. Ку тĕрĕс, анчах çав хаçат страницисенче те халĕ «çураки пуçланманпа пĕрех-ха». Комсомольски районри «Октябрь ялавĕ» хаçат колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕçре «хăвăртлăхсем çитеймеççĕ» тесе палăртать, анчах çав хăвăртлăхсем хаçат страницисенче те çитсех каймаççĕ-ха. Кунта эпир хаçатсем çуракине хатĕрленесси çинчен пачах çырмаççĕ, тесе калассăн мар. Вĕсем çыраççĕ, сахал мар-и, тен. Анчах мĕнле çыраççĕ-хи?

Ку тĕлĕшпе пирĕн районсенчи хаçатсен ĕçĕнче чылай пысăк çитменлĕхсем пур.

Пĕррешĕнчен, чылай хаçатсем çураки ыйтăвĕсене питĕ çиелтен çутатса пыраççĕ. Вĕсем пĕр стандартпа çырнă темиçе пĕчĕк заметка пичетлеççĕ те, çав заметкăсенче кашниннех çуракине хатĕрленес ыйтусене пурне те пĕр-икĕ сăмахпа та пулин асăнса иртсе кайма тăрăшаççĕ. Çавăн чухлĕ вăрлăх хывнă, çавăн чухлĕ сортланă; çавăн чухлĕ машина юсанă; çавăн чухлĕ тислĕк пухнă, çавăн чухлĕ хире кăларнă; çавăн чухлĕ агрокружок организациленĕ, çавăн чухлĕ заняти ирттернĕ; çавăн чухлĕ çĕр çинче юр тытнă; çавăн чухлĕ уг таврашĕ юсаса хатĕрленĕ; çавăн чухлĕ вăкăра кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ, тесе çыраççĕ. Çапла вара пĕтĕм заметка тĕрлĕ цифрăсемпе хушаматсен тата «гектар», «центнер», «процент» йышши сăмахсен купи пулса тухать. Анчах çав ĕçсене МĔНЛЕ туни çинчен, ăнăçлăн ĕçлеме МĔН пулăшни çинчен тата **МĔНЛЕ МЕСЛЕТПЕ** ĕçлеме кирли çинчен, малта пыракансенчен юлса пыракансем МĔН вĕренме пултарни çинчен, колхозсен **ПУÇАРУЛĂХĔ** çинчен чылай хаçатсем пачах çырмаççĕ е питĕ сахал çыраççĕ. Сăмахран, «Колхоз ялавĕ» хаçат (Елчĕк районĕ): «Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çуракине тĕплĕн хатĕрленет», тесе çырать. Мĕне пĕлтерет-ха ĕнтĕ çав «ТĔПЛĔН» тени? Хаçат ăна уçса памасть. Çакăн пек пушă сăмахсемпе каличчен, пĕр-пĕр ыйтăва кăна илсе, ăна пур енчен те тарăнăн çутатса пани усăллăрах мар-и-ха вара? Илес, сăмахран, машинăсене юсас ĕçе. Ку ыйтура вулакана мĕн интереслентерет-ха? Тимĕрçĕ лаççи мĕнле çуртра, унта мĕн çитмест, ĕç хатĕрĕсем пур-и, вĕсем юсавлă-и; кăмрăк ăçта хатĕрлеççĕ, мĕн чухлĕ хатĕрленĕ; тимĕрçĕ пулса кам ĕçлет, ăна кам пулăшать, вĕсем ĕç нормине мĕнле тултараççĕ, ĕç укçи мĕн чухлĕ илеççĕ; вĕсем мĕнле машинăсене тата мĕнле юсаççĕ; запаслă пайсене ăçтан илеççĕ; юсав пахалăхне кам тĕрĕслет тата юсанă машинăсене кам йышăнать; машинăсене юсама график тунă-и, вăл мĕнле пурнăçа кĕрсе пырать; кӳршĕри колхозсен машинисене мĕнле юсаççĕ тата ытти те.— çаксене пурне те вулакан пĕлесшĕн. Çак ыйтусем çине ответ паракан заметка вулаканшăн усăллă та, интереслĕ те. Ахаль цифрăсемпе тата пушă сăмахсемпе çырнă заметка вара пĕр-пĕр статистика кăна кирлĕ пулма пултарать.

Иккĕмĕшĕнчен, хăшпĕр хаçатсем ĕçе тытăннă-тытăнманах хытă шавлама, мухтанма юратаççĕ. Сăмахран, «Октябрь ялавĕ» хаçат (Комсомольски район) пĕлтернĕ тăрăх, вĕсен районĕнче çуракине хатĕрленсе çитнĕ колхозсем те пур ĕнтĕ. Декабрĕн 7-мĕшĕнче тухнă номерте редакци пĕр заметкине: «Çĕнĕ çула çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илетпĕр», тесе ят панă. «Колхозник сасси» хаçатра та (Муркаш районĕ) «Çуракине хатĕрленсе çитетпĕр» тесе шавлакаланине курма пулать. Тӳрех калас пулать, редакци работникĕсем çав «хатĕрленсе çитнĕ» колхозсене кайса тĕплĕнрех паллашнă пулсан, туса çитермен е начар тунă ĕçсем нумай тупнă пулĕччĕç. Анчах ун вырăнне вĕсем мухтанма васкаççĕ. Çакă вăл тĕрĕс мар. Пире вĕрсе хăпартнă цифрăсемпе фактсем кирлĕ мар, пире çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрлени, кашни ĕçех лайăх пахалăхпа туни кирлĕ.

Виççĕмĕшĕнчен, чылай хаçатсем хăйсен районĕнчи пĕр-пĕр малта пыракан колхоз çуракине хатĕрленни çинчен кашни номертех çыраççĕ, час-часах икĕ-виçĕ заметка та кĕртеççĕ; çав вăхăтрах кая юлса пыракан е вăтам ĕçлекен тепĕр колхоз çинчен çур çулта та пĕр заметка та кĕртмеççĕ. Тĕслĕхрен, çӳлте асăннă хаçатсенех илсе пăхар. «Октябрь ялавĕ» хаçат Çĕнĕ Кипеç ялне пĕр номертен те сиктерсе хăвармасть. «Колхоз ялавĕ» хаçат Ворошилов ячĕпе тăракан тата «Марс» колхозсем çинчен час-часах çырать, анчах Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ «Ново-Ищерякове» колхоз çинчен (вăл халĕ вăтам кăна ĕçленĕрен пулмалла) питĕ сахал çырать, ăна начар пулăшать. «Коммунизм çулĕпе» хаçат Типçырма ялсоветĕнчи колхозсене ялан асра тытать, анчах Шупуç ялсоветĕнчи колхозсем çинчен уйăхĕ-уйăхĕпе манса пурăнать, çуракине тухсан вара кунти колхозсем юлса пыни çинчен пĕлтерет. Çакăн пек йăлана пĕрттех тĕрĕс тесе йышăнма çук. Районри хаçатсен шăпах халĕ ĕнтĕ юлса пыракан колхозсем çине ытларах çавăнса пăхмалла, шăпах халĕ вĕсене малтисемпе танлашма пулăшу памалла.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хаçатсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăма кирлех те мар пулĕ. Вĕсене ВКП(б) Обкомĕпе райкомĕсем йышăннă решенисенче уçăмлăн кăтартса панă. Районсенчи хаçатсен çав решенисене пурнăçа кĕртме активлăн пулăшса пымалла. Сăмахран, çав решенисенче кăтартса панă задачăсенчен пĕри, çывăх вăхăтра пурнăçа кĕртмелли задача—тракторсемпе комбайнсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсасси пулса тăрать. Çак енĕпе Украина ССР-ĕнчи Старо-Бешевски МТС работникĕсен пуçарăвĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Районри хаçатсен МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕ мĕнле пыни çинчен анлăн çутатса тăмалла. Анчах халĕ çакна курма çукха. «Колхоз ялавĕ» хаçат уйăхĕ-уйăхĕпе МТС ĕçĕсем çинчен нимĕн те çырмасть. Елчĕк районĕнче машинно-тракторнăй станци нумай ĕçсене татса паракан вăй пулса тăнине манса хăварать.

Халĕ республикăра вырăнти удобренисем пухса хире кăларас тĕлĕшпе хĕрӳллĕн ĕçлемелли уйăхлăх пырать. Çак уйăхлăх çинчен те районри хаçатсем сахалтарах çыраççĕ-ха.

Кăçалхи çурхи акана большевикла хатĕрленсе кĕтсе илесси çак ĕçе партипе комсомол организацийĕсем куллен ертсе пынинчен килет. Апла пулин те, районсенчи хаçатсем партипе комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен ĕçне питĕ çителĕксĕр çутатса пыраççĕ. Ку çеç те мар. Чылай хаçатсенче ĕçлекен юлташсем парти пурнăçне çутатса тăрасси—хăйсен чи пысăк ĕçĕ пулса тăнине шута илме пăрахрĕç пулас. «Çĕнтерӳшĕн» хаçат çур çул хушши ĕнтĕ «Парти пурнăçĕ» пайĕ кăлармасть. «Колхозник сасси» хаçатри «Парти пурнăçĕ» пайĕн статьисем кашни номертах пĕр ятпа: «Коммунистсен районри пухăвĕ», текен ятпа тухаççĕ. Çак çитменлĕхе ытти хаçатсенче те курма пулать. Партипе комсомол организацисен пурнăçне туллин, тĕплĕн çутатса тăрасси, уйрăмăн илсен, вĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе мĕнле ертсе пынине кăтартса пырасси — вырăнти хаçатсен пирвайхи тивĕçĕ пулса тăмалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактаран — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31. издательство конторин — ...3.

НТ 00253 Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2, ф. б. ... Тираж 16.000 экз.